Ял тăрăхĕсен депутачĕсем хăйсене ĕçре кăтартаççĕ

# Урамри тирпейлĕх – ялсен малашлăхĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Халăх шаннă çынна ял çыннисем те итлеççĕ, унăн пуçăннă ĕçĕсем те çур çулта чарăнса лармаççĕ. Çакна пăхсан, «2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси» программа, ялсем патне асфальт сарнă çулсем çитересси, ЧР Президенчĕн «Çамрăк граждансене патшалăх енчен пулăшассине вăйлатасси çинчен» Указĕ, «АПК аталантарасси» нацпроект тата ытти те ял пурнăçне çывăх вăхăтрах тĕпрен улăштарма пултарнине ĕненетĕн. Çак ырă тĕллевсемпе мал туртăмлă улшăну ĕçĕсем тĕпрен илсен йăлтах хамăртан килнине кунта пурте ăнланаççĕ тата пĕр тĕллевлĕ пулса ĕçлеççĕ. «Пирĕн ял – пирĕн кил» девиз 1994 çулта газ кĕртсе пĕтернĕ ял çыннисене тăван яла илемлетессипе, тирпейлесе хăт кĕртессипе тăрăшса ĕçлеттерет. Ĕçсем епле пынине вара выранти депутат Владимир Леонидович Хлебников пăхса-йĕркелесе пырать.

– Чăваш Республикин Президенчĕ ялсенчи тирпейлĕх çине тимлĕ пăхăнăран хамăр урама асфальт çул сарма тытăниччен эпир те тăван ял урамĕсене малтан тĕплĕн тирпейлес тесе шутларăмăр. Ахальлĕн, халăх калашле, выртан каска мăкланать. Пирĕн вара çакăнтах пурăнмалла, ача-пăчана тĕрĕс воспитани парса ӳстермелле, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçлĕ шайра тытмалла, – мал туртăмлăхне пытармасăр калаçать В. Хлебников депутат. Унăн сăмахĕсемпе ял старости Валентина Ивановна Матюшкина та килĕшет.

– Владимир Леонидович ял çыннисен пурнăçне цивилизаци ыйтнă шая çĕклессишĕн тăрăшать. Анчах пурте тăруках пулмасть. Çакна ял çыннисем ăнланчĕç те ватти-вĕтти пĕрле пулса урамсене тирпейлеме тухрĕç, – ăнлантарчĕ пирĕн патăмăра çитнĕ староста В. Матюшкина.

Милютакассинче икĕ урам, вĕсенче 75 хуçалăх. Нихăш кил тĕлĕнче те вĕлтĕрен ӳсни çук. Çамрăксем яла юлма кăмăлланипе юлашки 10 çулта ку тăрăхра 16 килтен çамрăксен урамĕ çĕкленчĕ. Хĕрсемпе каччăсем ялтан кайманнине урамсенче пĕчĕк ачасем нумаййи çирĕплетсе парать. Ял çамрăкланать пулсан, вĕсене пурнăç ыйтакан çĕнĕлĕхсемпе тивĕçтерсех тăмалла. Çак çĕнĕлĕхсенчен пĕри вăл – асфальт сарнă çул.

– Ĕмĕрлерĕмĕр пыльчăк çăрса. Хăть ватлăхра асфальт çулпа утмалла пултăрччĕ. Çакна тума малтанах ял хушшине тирпейлемелле тенине кăмăлпа йышăнатпăр. Никам та хытармасан-пуçламасан çаплипех çăрăлса пурăнатпăр. Тирпей-илем кӳнине кура çулне те тума шантараççĕ. Çак мал ĕмĕтпе эпир те хамăр тĕлти икĕ штабель кирпĕче, йывăç купине, хăйăрпа вак чула урамран пуçтартăмăр. Тирпейсĕрлĕх тек пирĕн урама килсе ан кĕтĕр тетпĕр, – ăшшăн сăмахласа ĕнер пулнă кирпĕч купи выранне кăтартать 75 çулхи Зоя Андреевна Трофимова.

Ял урамне тирпей-илем кĕртес ĕçе çак кунсенче Милютакассисем çемйи-çемйипех явăçрĕç. Аслисемпе пĕрле ача-пăчасем те май килнĕ чухлĕ ĕçлерĕç.

– Хамăр тĕле тирпейлесе пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Çемьере тăватă ача та вĕсен пулăшăвĕ нихăçанхинчен те выранлăрах пулчĕ. Урамра вак чула, кирпĕч купине, ытти строительство материалĕсене пуçтартăмăр та хамăр урам палламалла мар улшăнчĕ: епле сарлака та хăтлă иккен вăл! – савăнăçне пытармасăр калаçать Вера Васильевна Павлова.

Ольга Андреевна Жирнова та ял çыннисем урама хăт кĕртме тухнинчен пăрăнса юлмарĕ: кĕске хушăрах вĕсен тĕлĕнчи хăйăрпа гравмассăран ячĕ кăна юлчĕ.

– Таса урама таса туйăмпа тухатăн. Тирпейлĕ ялпа хаçат валеçсе çӳреме те кăмăллă, – калаçăва хутшăнчĕ сăрă ĕçĕнчен пăрăнса Раиса Александровна Пайкова почтальонка.

Ял депутачĕн пуçарăвĕ вăй-питти çынсемпе пĕрлех ватă-вĕтĕне те айккинче хăвармарĕ. Акă 85 çулхи Раиса Корниловна Максимова иккĕмĕш-виççĕмĕш группăри инвалид-ачисене пăхса пурăнать.

– Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăнса инвалида тухнă мăшăрăм вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. 4 ачаран та пĕр ывăлăм вăхăтсăр вилчĕ. Икĕ ачи инвалид пулсан та мĕн те пулин ĕçлеме тăрăшаççĕ-ха. Çывăхри кану кунĕсенче хулара штукатур-каменщикре ĕçлекен хĕрĕм килсен кил таврашне тирпейлесе пĕтерĕпĕрех, – шантарса калаçать Раиса кинемей.

Çапла пурăнать, тирпейленет, аталанать Милютакасси. Выранти ял депутачĕн В. Хлебниковăн яла хăт кĕртессипе плансем татах та пысăкрах. Турă пулăштăр ăна.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**«Урама тирпейлесси – пĕрлехи ĕç. Унран никамăн та пăрăнса юлма юрамасть. Çак ĕçе пуçаракан ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутатне Владимир Леонидович Хлебникова эпир пысăк тав калама тивĕç. Тав сăмахне каламалла та тирпей-илемшĕн çанă тавăрса ĕçлемелле», – терĕ вак чула урапа çине тиенĕ май О. Жирнова.**



**В.Л. Хлебников депутат пурăнакан кил-çурт. Çакăнти пек тирпейлĕхе вăл паян ял çыннисенчен те ыйтать.**



**Аслисем яла асфальт çул çитерессипе тата яла хăт кĕртессипе ĕçлени ачасен аса илĕвĕнче нумайлăха юлĕ.**



**Ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутачĕ В. Хлебников 85 çулхи Р. Максимовапа ăнлантару калаçăвĕ ирттерет.**



**Тăван хуçалăхри выльăхсене пăхса тивĕçлĕ канăва тухнă Виталий Изосимович Николаев ялваррипе асфальт çул, çул хĕррипе хулари пек тротуар пуласса шанса тирпейлет хăйĕн хуçалăхĕ тĕлĕнчи ăпăр-тапăра. «Ыйтакан пулмасан татах 100 çул выртатчĕç пулĕ-таха, анчах хамăр япăха хамăрăнах пуçтарас пулать», – вутă татнă май калаçать ял çынни.**



**«Хытармасан çаплипех çăрăлаттăмăрччĕ пулĕ. Халĕ урама тирпейлĕх кĕчĕ», – кăмăллăн калаçать З. Трофимова.**

Прокуратура материалĕсем тăрăх

# Алимент тӳлесси те саккунлă пулмалла

Çын вĕлерни, япала вăрлани правăна пăснă пысăк тĕслĕхсем пулсан, ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачисене пăхманни тата çак ĕçрен юриех тарса çӳрени татах та пысăкрах айăп пек туйăнать. Анчах çакна ирĕке хăнăхнă хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ пуçа илесшĕн мар курăнать. Çавăнпа та кунашкал чылай ĕçе саккунпа килĕшӳллĕн уголовнăй ĕç пуçарса татса пама та тивет. Шăпах çакăн пирки пулĕ те пирĕн паянхи калаçу.

Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 157-мĕш статйинче ачисене тата ĕçлеме пултарайман ашшĕ-амăшĕсене пăхса тăма укçа-тенкĕ уйăрассинчен юриех пăрăнакансене айăпласси пăхнă.

Çул çитмен тата 18 çул тултарнă, анчах ĕçлеме пултарайман ачасене пăхса усрама судпа укçа-тенкĕ уйăрма йышăннă, ашшĕ е амăшĕ çав йышăнуран сĕмсĕррĕн пăрăнать пулсан, вĕсене 120 – 180 сехет обязательнăй майпа ĕçлеттерессипе е çулталăкчен ĕçлесе юсанмалла айăплама, е виçĕ уйăх таран арестлеме пултараççĕ.

Çул тултарнă тата ĕçлеме пултаракан ачасене суд йышăнăвĕпе ĕçлеме пултарайман ашшĕ-амăшне пăхса пурăнма укçа-тенкĕ уйăрма йышăннинчен сĕмсĕррĕн пăрăннăшăн 120 – 180 сехет обязательнăй майпа ĕçлеттерессипе е çулталăкчен ĕçлесе юсанмалла айăплама, е виçĕ уйăх таран арестлеме пултараççĕ.

Хамăр ĕçĕмĕрте пирĕн çак статьяпа час-часах усă курма тивет. Акă кăçал кăна алимент ыйтăвĕпе 14 ĕç суда ярса патăмăр. Вĕсене пурне те тивĕçлипе пăхса тухнă. Халĕ кĕскен юлашки икĕ ĕç çинче чарăнса тăрам-ха.

*Ольга Васильевна НИКОЛАЕВА пирки.* 1966 çулхи майăн 22-мĕшĕнче çуралнă хĕрарăм Юрий Петрович Николаевпа саккунлă пĕрлешсе 2000 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче Павел ятлă ывăл çуратать. Çав çулах вĕсем уйрăлаççĕ тата хыççăнах амăшне ача прависенчен хăтараççĕ, Павела ача çуртне ăсатаççĕ. Çакăн хыççăн 2003 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарти Калинин районĕнчи 3-мĕш номерлĕ суд участокĕ ача çуртĕнчи Павела çул тултариччен пăхма амăшĕн тупăшĕнчен тăваттăмĕш пайне ача çурчĕ валли уйăхсерен шыраса илме йышăну кăларать. Çакă хĕрарăмшăн паллă пулсан та, вăл ĕçе вырнаçма васкаман, алиментсем тӳлемен. Çакна кура ăна 2006 тата 2007 çулсенче Муркаш район сучĕпе уголовнăй майпа айăпланă. Юлашки айăплавран вăл 2007 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче ирĕке тухнă, анчах паян кунччен ĕçе вырнаçман, алиментсем тӳлемен. Купăрля хĕрарăмĕн паянхи куна алимент парăмĕ 136227 тенкĕ те 20 пуса çитнĕ.

Хăйĕн хăтланăшĕсемпе О.В. Николаева РФ УК 157-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнчи преступление тунă: амăшĕ пулса суд йышăнăвне тĕпе хурса çул çитмен ачине пăхма укçа-тенкĕ тӳлессинчен сĕмсĕррĕн пăраннă.

*Вячеслав Владимирович ИЛЬИН пирки.* 1959 çулхи майăн 18-мĕшĕнче çуралнăскере 2003 çулта РФ Уголовнăй Кодексĕн 119-мĕш статйипе çулталăклăха условнăй майпа айăплани, 2007 çулхи августăн 28-мĕшĕнче Уголовнăй Кодексĕн 157-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнчи преступление тунăшăн 6 уйăхлăх ĕçлесе юсанмалла туни тăн кĕртмен пулас. Ваçкассинче пурăнакан арçын 2006 çулхи майăн 15-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ хăйĕнчен пĕтĕм ĕç укçин виççĕмĕш пайне 1991 çулхи июнĕн 8-мĕшĕнче çуралнă Денис ывăлĕ валли шыраса илмелле тунине пăхмасăрах, суд приставĕсен асăрхаттарăвне шута илмесĕрех сĕмсĕррĕн алимент тӳлессинчен пăрăнса çӳренĕ.

Çапла вара В.В. Ильин РФ УК 157-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнчи преступление тунă: ашшĕ пулса суд йышăнăвне тĕпе хурса çул çитмен ачине пăхма укçа-тенкĕ тӳлессинчен сĕмсĕррĕн пăраннă.

Саккуна пăсакансем тивĕçлĕ ответ тытасса, вĕсен тĕслĕхĕ ыттисемшĕн урок пуласса шанатăп.

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ.**

Следстви комитетĕнчен

## Амăшĕпе ывăлĕ пирки

Шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсен час-часах эрех ĕçекенсемпе тĕл пулма, вĕсем обществăри йĕркелĕхе пăснине курсан çак «хастарсене» шалти ĕçсен пайне илсе килсе «сивĕтме» тивет. Кун пек чух йĕрке пăсакансем эрех хăвачĕпе усă курса милици сотрудникĕсене хирĕç калани, вĕсен чысне сăмахпа варалани, йĕрке хуралçисем çине алă çĕклени тĕл пулать.

Çакнашкал ӳкерчĕке августăн 6-мĕшĕнче Анаткасси ялĕнче те курма май килнĕ. 30 çулхи ӳсĕр ывăлне милицие лартса кайма тăрсан пĕрле пулнă ӳсĕр амăшĕ милиционерсене «атакăлать»: усал сăмахсемпе милиционерсене кӳрентернипе пĕрлех çак «хастар» хĕрарăм йĕрке хуралçисене формисенчен тытса ывăлне милицие илсе кайсан милиционерсен çемйисене усал тăвассипе хăратать, пĕр милиционера питрен те, майран та чавса илет. Халĕ ку ĕçпе прокуратура çумĕнчи следстви пайĕн следователĕ ĕçлет.

## Хăратнишĕн

Июнĕн 21-мĕшĕнче 22 сехет тĕлĕнче шалти ĕçсен пайне Москакассинче вырнаçнă «Просвещенец» дача участокĕпе юнашар пĕвере шыва кĕнĕ чух пĕр хĕрарăм путса вилессипе хăратни çинчен пĕлтерни çитнĕ. Хĕрарăм шыва путман, анчах ун тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕç халĕ прокуратура çумĕнчи следстви пайĕнче малалла пырать.

## Çын аманнă

Июнĕн 30-мĕшĕнче «Çеçпĕл» акционерлă обществăри слесарь «Баян» инструментпа алюмини пичкене каснă чух касакан пайпа аллине амантать, больницăна лекет. Процессуаллă йышăну тума ку ĕçпе те тĕрĕслев ĕçĕсем пыраççĕ.

**С. КОШКИН, Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн следователĕ.**